Çĕнĕ 2007 çул ячĕпе саламлатпăр!

Çĕнтерӳ ялавĕ

Муркаш район хаçачĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнченпе тухать

1 (7426) № ✻ Тунти кун, 2007 çулхи январĕн (кăрлач) 1-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

ХАКЛĂ ЕНТЕШСЕМ!

Чи хаваслă уявсемпе – Çĕнĕ çул тата Сурхури ячĕпе сире чĕререн саламлатăп!

Ырă йăлапа иртсе каякан çулталăка аса илнĕ май эпир çирĕплетсех çапла калама пултаратпăр: республика историйĕшĕн вăл паллă тапхăр пулса юлĕ. Пирĕн тăван çĕр палăрмаллах çĕнелсе улшăнчĕ, хитререх, кăмăллăрах тата хăтлăрах пулса тăчĕ. Обществăлла инфраструктура активлă аталанать, пурăнмалли çуртйĕр строительствин хăвăртлăхĕ пĕчĕк мар, çынсене ĕçмелли паха шывпа тивĕçтерессин программи пурнăçа кĕрсе пырать.

Республика приоритетлă наци проекчĕсене пурнăçа кĕртессипе малти вырăнсене йышăнать. Вĕсем çынсен пурнăç шайне палăрмаллах лайăхлатассипе çыхăннă. Пирĕн пуçарусенчен чылайăшне Раççей наци приоритечĕсен концепцине кĕртнĕ.

Эпир вырăнти самоуправленин историллĕ реформине япăх мар пурнăçласа пыратпăр, влаçа конкретлă çынпа çывăхлататпăр. Çакă пире актуаллă ыйтусене оперативлă татса пама, вăхăтпа тан пыма май парать. Эсир влаçа Чăваш Республикин çыннисен интересĕсене хӳтĕлессипе пулăшса тăни хамăр умри задачăсене ăнăçлă татса пама майсем уçса парать. Чăвашсем çапла калаççĕ: «Этем тени ĕçпе паха». Ăлла-аллăн пĕрле ĕçлесе пынипе Чăваш Республики аталану çулĕпе малалла утăмлать.

Хисеплĕ ентешсем! Çĕнĕ 2007 çулта та пире ответлă та интереслĕ ĕç кĕтет. Ача çулталăкĕнче амăшлăха тата ачалăха пулăшасси, обществăн ăс-хакăл аталанăвĕ малти вырăнта пулĕç. Республика кунĕ тĕлне пур библиотекăсем те тĕслĕхлисем пулса тăрĕç. Республикăри ялсене асфальт сарнă çулсемпе çыхăнтарас ĕçе 2007 çулта та анлăн туса пырăпăр.

Ку вăл пирĕн пĕрле тумалли ĕçсен пĕчĕк пайĕ кăна. Вĕсене эпир чиперех пурнăçласса шанса тăратăп. Халăхра ахальтен каламан ĕнтĕ: «Çĕр çинче этем туман ĕç çук». Пур кăмăлтан сире ăнăçу, телей, ырлăх-сывлăх, тăнăç пурнăç, юрату тата çемье ăшши сунатăп! Сирĕн ĕмĕтĕрсем пурнăçланса пыччăр. Çĕнĕ çул, çĕнĕ телей ячĕпе сире!

Чăваш Республикин Президенчĕ Н. ФЕДОРОВ.

ХИСЕПЛĂ ЕНТЕШСЕМ!

Пурнăç пĕр вĕçĕм малаллах каять. Каллех, акă, Çĕнĕ çул çитрĕ. Кашни çын ăна çĕнĕ ĕмĕтсемпе, çĕнĕ тĕллевсемпе кĕтет. Çĕнĕ çулта пурнăç лайăхрах: çăмăлрах та лăпкăрах пуласса шанаççĕ пурте.

2006 çула район ĕçченĕсем, йывăрлăхсене пăхмасăрах, япăх мар кăтартусемпе вĕçлерĕç. Кăçал район çыннисен пурнăçĕнче нумай ырă улшăнусем пулса иртрĕç. 4 наци проекчĕ халăхшăн чăннипех те пысăк çăмăллăхсем илсе килчĕ. Ялсем те çĕнелсе улшăнчĕç. ЧР Президенчĕн Указĕпе килĕшӳллĕн вĕсем патне асфальт çул сарас ĕç пуçланчĕ. Ку ĕçе çитес çул татах та ытларах ялсем патне çити тума тĕллев лартатпăр.

2007 çулта пур отрасльте те ӳсĕмлĕ ĕçлеме пур майсем те пур. Ял хуçалăх ĕçченĕсем те, промышленноçпа строительствăра, суту-илӳре вăй хуракансем те, халăха вĕрентес, сывлăха сыхлас енĕпе тăрăшакансем те, культура ĕçченĕсем те çĕнĕ çулта çĕнĕ чикĕсем çĕнсе илессе, малалла тата та ӳсĕмлĕрех вăй хурасса шанас килет. Çĕнĕ çулти çĕнĕлĕхсем кашни çыннăн явапăхне ӳстерме ыйтаççĕ. Пурте пĕр тĕллевпе ответлăха туйса вăй хурсан, эпир çĕнĕ çулта та умри тĕллевсене пурнăçлăпăр. Çакна 2006 çулта – Ăс-хакăлпа чун аталанăвĕн çулталăкĕнче – тепĕр хут туйса илтĕмĕр. 2007 çула вара ЧР Президенчĕ Ачасен çулталăкĕ тесе ят пачĕ. Çакă пире хамăрăн явапăха татах та ӳстерме хушать. Кашнинех пирĕн ĕçре те, килте те ачасемшăн ырă тĕслĕх пулса тăмалла. Вара район пуласлăхĕ татах та уçăмлăрах пулĕ.

Пурне те Çĕнĕ çул, çывхарса килекен Христос çуралнă кун ячĕпе саламлатăп. Çирĕп сывлăх, ĕçре ăнăçу, çемьере килĕшӳ сунатăп. Çĕнĕ çулта ĕмĕтленнĕ ĕмĕтĕрсем çитсе пыччăр. Хăвăрăн та, ачăрсен кун-çулĕ те телейлĕ пултăр.

Район пуçлăхĕ Ю. ИВАНОВ.

Районта пурăнакансене Çĕнĕ çул уявĕ ячĕпе çавăн пекех РФ Патшалăх Думин депутачĕ Павел Семенов саламлать, ырлăх-сывлăх, ăнăçусем сунать.

УВАЖАЕМЫЕ ЖИТЕЛИ МОРГАУШСКОГО РАЙОНА! ДОРОГИЕ ДРУЗЬЯ!

Тепло и сердечно поздравляю вас с Новым годом и Рождеством Христовым!

Новогодние и рождественские праздники особенные. Это праздники общей радости, общего веселья, общей надежды на то, что следующий год принесет обновление, рождение светлой веры в лучшее.

2006-ой год уходит в прошлое. Очень хочется, чтобы вместе с ним ушли в прошлое болезни и невзгоды, но сохранилось и приумножилось все прекрасное, что он подарил нам.

В Новый год принято загадывать желания. Пусть сбудутся все ваши самые светлые мечты. Пусть всегда рядом с вами будут ваши родные и друзья. Пусть царят в ваших домах благополучие, любовь и взаимопонимание.

Здоровья вам, счастья и больших успехов!

Председатель Комитета Госсовета по социальной политике, здравоохранению, физической культуре и спорту О.Ю.ЗАЙЦЕВА.

УВАЖАЕМЫЕ ЖИТЕЛИ МОРГАУШСКОГО РАЙОНА!

Страховой отдел в с. Моргауши Чувашского филиала Росгосстрах поздравляет Вас с Новым 2007 годом.

Пусть наступающий год будет для Вас успешным и плодотворным, добавит сил и энергии для воплощения задуманного, принесет удачу и процветание. Искренне желаем любви и добра, здоровья и радости, дальнейшего сотрудничества.

Страховой отдел в с. Моргауши.

Çĕнĕ çул умĕнхи интервью

Çитĕнӳ çулĕпе пĕрлех утасчĕ

Сисмерĕмĕр те, черетлĕ тепĕр çул вĕçленчĕ. 2006 çул историе кĕрсе юлчĕ. Иртнĕ çул районта ырă улшăнусем сахал мар пулса иртрĕç. Халăх хуçалăхĕн кашни отрасльнех пырса тивеççĕ вĕсем. Районта пурăнакансем те çакна лайăхах туйса илчĕç.

Мĕнлерех шухăш-кăмăлпа кĕтсе илет районăмăр çĕнĕ 2007 çула? Çакăн пирки каласа парать те ĕнтĕ хаçатăн паянхи хăни – район пуçлăхĕ Ю. А. ИВАНОВ.

– Юрий Александрович, иртсе каякан 2006 çула мĕнле хак панă пулăттăр?

– 2006 çул япăх иртрĕ тесе калас килмест. Йывăрлăхсем пулчĕç пулин те, пурте пĕр тĕллевлĕн вăй хунăран кăçал аталану çулĕпе черетлĕ утăмсем турăмăр. Пурнăç паян ыйтакан технологие пурнăçа кĕртсе, ӳсĕмлĕрех ĕçлеме тăрăшрăмăр, районăн экономикăпа социаллă пурнăç аталанăвĕшĕн тимлерĕмĕр. Ял хуçалăх, промышленность продукцине ытларах туса илессишĕн, обществăлла инфраструктурăна аталантарассишĕн, халăхăн пурнăç шайне лайăхлатассишĕн çине тăрса вăй хутăмăр. Çакă вара йăлтах экономика тĕлĕшĕнчи лару-тăрăва лайăхлатма, налук хумалли никĕсе пысăклатма, пĕтĕм шайри бюджет тупăшне лайăхлатма май пачĕ.

2006 çул 131-мĕш Федераллă саккун вăя кĕнипе те паллă пулса юлчĕ. Ытларах ыйтăва вырăнсенчех ял тăрăхĕсенче татса патăмăр. Çăмăлах мар пулин те, хамăрăн пурнăçа хамăрах йĕркелесе пыма пултарнине, ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем халăх шанăçне тӳрре кăларма тăрăшнине çирĕплетсе пачĕ çакă.

Иртнĕ çул 4 наци проекчĕ пурнăçа кĕнипе те асра юлчĕ. Çав наци проекчĕсем халăх пурнăçне лайăхлатас ĕçе ырă варкăш илсе кĕчĕç. Районта пурăнакансем çакна хăйсемех лайăх туйса илчĕç.

Çавăн пекех иртнĕ çула ЧР Президенчĕ Ăс-хакăлпа чун аталанăвĕн çулталăкĕ тесе хак пани те пире тĕрĕс пĕтĕмлетӳ тума хистерĕ: хамăршăн, хамăр район аталанăвĕшĕн пирĕн хамăрăнах тăрăшмалла. Пĕр-пĕрне ăнланса пурăнсан, ĕçлесен, ӳсĕм çулĕ те уçăлсах пырать.

– Экономикăпа социаллă пурнăç аталанăвĕн кăтартăвĕсем мĕн çинчен каласшăн-ха?

– 2006 çулта промышленность предприятийĕсем 461 миллион тенкĕлĕх продукци кăларса ăсатнă. Е иртнĕ çулхи çак вăхăтринчен 10 процент ытларах. "Сеспель" чикĕллĕ явапăхлă обществăн тӳпи кунта 46 процент чухлĕ. Асăннă предприяти хăйĕн кăтартăвне малтанхинчен 1,4 хут ӳстерчĕ. "Моргаушсетьгаз" филиалĕн кăтартăвĕ вара 54 процент чухлĕ ӳсрĕ. Çавăн пекех "Моргаушское" çуртйĕрпе коммуналлă хуçалăх предприятийĕ" МУП (135 процент), "Сундырь –Хлеб" чикĕллĕ явапăхлă общество(122 процент) тата ытти предприятисем ăнăçлă ĕçленине палăртмалла.

Çăмăл мар пулин те, ял ĕçченĕсем умри тĕллевсене пурнăçлассишĕн ырми-канми тăрăшрĕç. Пĕтĕмпе ял хуçалăх продукцине 1.328,0 миллион тенкĕлĕх туса илнĕ: 101 процент. Тĕш тырăпа пăрça йышши культурăсене 28 пин тонна пуçтарса кĕртнĕ. Вăтам тухăç 17 центнерпа танлашрĕ. "Ударник", "Восток" хуçалăхсенче вăл 24 центнертан та иртрĕ, Чкалов яч. хис. хуçалăхра 23 центнерпа танлашрĕ.

Пирĕн район республикăра çĕр улми туса илессипе те палăрса тăрать. Иртнĕ çул «иккĕмĕш çакăра» 20 пин тоннăна яхăн пуçтарса илтĕмĕр. Ку вăл виçĕмçулхинчен 7 процент чухлĕ ытларах. Вăтам тухăç 157,3 центнерпа танлашрĕ. Ку тĕлĕшпе уйрăмах "Оринино", "Ударник", Ильич яч. хис. хуçалăхсем ăнăçлă ĕçлерĕç.

Выльăх-чĕрлĕх сферинче те ырă утăмсем пулмарĕç мар. Республика шайĕнче сĕт туса илессипе чи малта пыратпăр. Аш-какай туса илессипе вара – 2-мĕш вырăнта. Иртнĕ çул ашкакай малтанхи çулхинчен 18 процент ытларах – 2850 тонна туса илтĕмĕр. Пĕтĕмĕшле сĕт туса илессипе те каялла чакман. Кашни ĕнерен вара вăтамран 3750 килограмм сĕт сунă е ун умĕнхи çулхинчен 6 процент нумайрах. Сыснасен талăкри вăтам ӳт хушаслăхĕ 15 процент, мăйракаллă шултра выльăхсен 2 процент чухлĕ хăпарчĕ.

Çакна палăртмалла, ĕçе пĕлсе йĕркелекен, кĕтĕве çĕнетессипе тимлĕ ĕçлекен, тĕп кĕтӳ йĕркеленнĕ хуçалăхсенче производство кăтартăвĕсем те пысăк. Ильич яч. хис., "Герой", "Оринино", "Свобода", "Ударник" хуçалăхсенче выльăхсен талăкри вăтам ӳт хушаслăхĕпе сĕт суса илесси те районти вăтам кăтартусенчен пысăкрах.

2006 çулта районти предприятисемпе учрежденисенчи вăтам ĕç укçи уйăхне 3615 тенкĕпе танлашрĕ, виçĕм çулхинчен 31 процент чухлĕ пысăкрах. Ăпла пулин те ял хуçалăхĕнче ĕç укçи çав-çавах пĕчĕк-ха: 2186 тенкĕ. Паян вăл пурăнмалли чи пĕчĕк минимумран сахал пулмалла мар. "Моргаушская" чăх-чĕп фабрикинче", "Ударник" сăнавпа производство хуçалăхĕнче, Ильич яч. хис. хуçалăхра, "Лидер" акционерсен хупă обществинче, "Оринино" хуçалăхра вăтам ĕç укçи районти вăтам кăтартуран пысăк. **(Вĕçĕ 2-мĕш стр.).**

Самообслуживани йĕркипе ĕçлĕç

–Ку кафе пĕтĕм Раççейшĕн парне пулчĕ,- терĕ Чăвашпотребсоюз Канашĕн председателĕ В. М. Павлов, - иртнĕ кĕçнерни кун Москакассинчи "Илем" кафене тĕплĕ юсав ĕçĕсем хыççăн çĕнĕрен уçнă чух.

-Кафене çĕнĕрен турăмăр тесен те йăнăш пулмасть, - терĕ Мăн Сĕнтĕр райпо Канашĕн председателĕ Л.П.Майкова. – Оборудовани илме 1 миллион, реконструкци тума 4 миллион тенке яхăн пĕтрĕ.

"Моргаушская" МСО ĕçченĕсем ĕçе 3 уйăхра вĕçлерĕç.

Асăннă кафе самообслуживани йĕркипе талăкĕпех ĕçлекен районти 1-мĕш кафе пулчĕ. Кунта коллектив валли пĕтĕм услови пур: душевой, цехсем те, складсем те малтанхинчен палăрмаллах нумай. Мăн Сĕнтĕрсемпе Москакассисене паллă кунпа район пуçлăхĕ Ю. А. Иванов ăшшăн саламларĕ, малалла татах та ăнăçлăрах ĕçлеме ырă сунчĕ.

Çак кун Мăн Сĕнтĕр райповĕ Шомикра тĕплĕ юсав ĕçĕсем хыççăн черетлĕ 4-мĕш самообслуживани магазинне уçрĕ. Республикăра ку вăл 25-мĕш çакнашкал магазин пулчĕ.

Çĕнĕ çул парнисем

Ачасем парнесемсĕр юлмарĕç

Çĕнĕ çул çитĕннисемшĕн çеç мар, уйрăмах вара ачасемшĕн пысăк уяв пулса тăрать. Уяв вара Хĕл Мучипе Юр Пикесĕр, парнесемсĕр епле-ха? Паллă ĕнтĕ, хальхи вăхăтра уяв кучченеçĕсене уйăрассипе те йывăрлăхсем çук мар.

«Апла пулин те ачасенчен нихăшĕ те уяв парнисемĕр юлман». Çапла пĕлтерчĕ ЧР Сывлăха сыхлас ĕç тата социаллă аталану министерствин районти социаллă хӳтлĕх пайĕн пуçлăхĕ Н.П. Петрова. Нумай ачаллă тата пĕчĕк тупăшлă çемьесенчи ачасем валли республика бюджетĕнчен кăçал районти социаллă хӳтлĕх пайĕ урлă 2061 уяв парни уйăрнă. Вĕсене ял тăрăхĕсем тăрăх валеççе панă.

Хамăр инф.

Уявра та ĕçлеççĕ

Тивĕçлĕ службăсем хатĕр пуласçĕ

Çулталăкĕпе кĕтнĕ кану кунĕсем çывхараççĕ. Çĕнĕ çул уявĕсем кăçал вунă куна тăсăлаççĕ: декабрĕн 30-мĕшĕнче пуçланаççĕ те январĕн 8-мĕшĕнче вĕçленеççĕ. Ĕçе вара январĕн 9-мĕшĕнче тухатпăр.

Уйрăмах кирлĕ службăсем уяв кунĕсенче епле ĕçлеççĕ-ха?

Районти тĕп больница врачĕ В.Г. Данилов пĕлтернĕ тăрăх Муркашпа Мăн Сĕнтĕр больницисем çак графикпа ĕçлеççĕ:

Январĕн 1, 2, 3-мĕшĕсем – кану кунĕсем.

Январĕн 4, 5 – мĕшĕсем - ĕç кунĕсем.

Январĕн 6, 7 – мĕшĕсем – кану кунĕсем.

Январĕн 8-мĕшĕнчен ĕç кунĕсем пуçланаççĕ.

Районти çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх предприятийĕсен ĕç графикĕпе райадминистрацин капиталлă строительство, архитектура тата пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх управленийĕн пуçлăхĕн çумĕ Н.В. Любимов паллаштарчĕ:

Аварийлĕ бригада куллен çула тухма хатĕр тăрать. Ответлă специалистсем дежурство йĕркипе ĕçре пуласçĕ. Коммуналлă хуçалăх ĕçченĕсем кирлĕ пулсан Муркаша 2-16-37, Мăн Сĕнтĕре 52-4-50 телефонсемпе шăнкăравламалла.

Пĕрлехи диспетчер службин телефонĕ: 2-13-59.

Депутат елки

Уява хутшăнчĕç

Раççей Патшалăх Думин депутачĕ Павел Семенов республикăри шкул ачисем валли çулленех Çĕнĕ çул елки йĕркелет. Кăçал вара депутат елкине хутшăнма «Манăн çемье, манăн йăх историйĕ» республикăри пултарулăх конкурсĕнче мала тухнисем тивĕç пулнă. Елка трактор тăвакансен Культура керменĕнче иртнĕ, ачасем депутатран пылак парнесем илме пултарнă. Чи лайăх пултарулăх ĕçĕсене Культура керменĕн фойинче йĕркеленĕ выставкăра вырнаçтарнă.

Конкурса вара республикăри тĕрлĕ районсемпе хуласенчи шкулсенчен 4 пин çурă ытла ĕç килнĕ. Пирĕн районтан Патшалăх Думин депутачĕн Павел Семеновăн елкине хутшăнма 23 вĕренекен тивĕçнĕ.

Çĕнĕ çул елкине пурте хутшăнма пултарайман пулин те, конкурса хутшăнакансен хушшинче выляса янисем çук. Унта ĕç тăратнисенчен кашниех хăйсен çемйи, йăхĕ, ашшĕ-амăшĕ, аслашшĕ-асламăшĕ пирки ытларах пĕлме пултарнă.

«Манăн çемье, манăн йăх историйĕ» республикăри пултарулăх конкурсне Павел Семенов депутат Чăваш Республикин Вĕрентӳ тата çамрăксен политикин министерствипе, Пĕтĕм Раççейри «Пĕрлĕхлĕ Раççей» партин Чăваш регион уйрăмĕпе пĕрле ирттернĕ.